Шкул çулне çитмен ача-пăча учрежденийĕсенче ĕçлекенсен кунĕ

# Ачасемшĕн чунне параççĕ

Ачасене воспитани парса пăхса ӳстересси мĕнле йывăр та сумлă ĕç пулнине



пурте ăнкарсах та каяймаççĕ пулĕ. Уйрăмах шкула кайиччен хи вăхăтра. Тĕрĕссипе ача аталанăвĕн шăп çав тапхăрĕнче унăн пурнăçри тĕп принципĕсем, кăмăл-туйăмĕ çирĕпленсе юлаççĕ. Çавăнпа та шкул çулни çитмен ача-пăча учрежденийĕсен ĕçĕ-хĕлĕ çамрăк ăрăвăн пуласлăхĕпе тӳрремĕнех çыхăннă.

Муркашра «Путене» ача сачĕ 1994 çулта ĕçлеме тытăннă. Çавăнтанпах кунта аслă воспитатель пулса Светлана Николаевна Иванова ĕçлет. Хăйĕн ĕçне чунтан парăннăскер, кашни ачана ăнланма, кашнин патне «çул тупма» пултарать.

Ача садĕнче 7 ушкăн йĕркеленĕ. Вĕсене пĕтĕмпе 150 ачана яхăн çӳрет. Ачасене воспитани парас ĕçре аслă пĕлӳ илнĕ 13 специалист, ятарлă вăтам пĕлӳ илнисем 6 специалист вăй хурать. Пĕрремĕш категориллисем 5 çын, иккĕмĕш категориллисем 9-ăн.

Ачасене çамрăклах тăван тавралăха юратма, унăн пуянлăхĕсене упрама вĕрентни пысăк пĕлтерĕшлĕ. Çавна шута илсе ку ыйтусене ача садĕнче айккинче тăратса хăвармаççĕ. Ачасене тавралăх илемлĕхне-пурлăхне хаклама вĕрентесси кунта чи пысăк пĕлтерĕшлĕ задачăсенчен пĕри пулса тăрать. Ку енĕпе тĕрлĕрен занятисем те сахал мар ирттереççĕ, походсене тухса çӳреççĕ.

Пултаруллă та хастар ĕçшĕн чыслă наградăсене тивĕçнисем ача садĕнче сахал мар. Кунта вăй хуракансенчен пĕри «Халăх вĕрентĕвĕн отличникĕ» хисеплĕ ята, виççĕшĕ республика шайĕнчи Хисеп грамотисене тивĕçнĕ. Ачасене тивĕçлĕ воспитани параssишĕн вĕсем хăйсенчен мĕн килнине пĕтĕмпех тума тăрăшаççĕ.

**В. ШАПОШНИКОВ.**



**Сăн ӳкерчĕксенче: ача садĕнче тăван тавралăхпа паллашассипе заняти иртернĕ вăхăтра; ача садĕнчи музейре.**

Вата çынсен кунĕ умĕн

# "Уçă алăксен" кунне йыхравлатпăр

***Кашни çын ĕмĕрĕ пĕрре килет, çавăнпа та ĕмĕре вăрăмрах тума тăрăшмалла. Ватă çынсен кунĕ çитнĕ май районти пур сиплев учрежденийĕсенче те аслă ăрăва хăйсем патне чĕнеççĕ. Çакăн пирки тĕплĕнрех паллаштарма "Муркаш районĕн тĕп больници" сывату учрежденийĕн поликлиника ертӳçинчен Е.Н. СЕМЕНОВАРАН ыйтрăм.***

**– Елена Николаевна, пирĕн районта "Уçă алăксен кунĕ", "Уçă алăксен эрни" ирттерессине йăлана кĕртнĕ, кăçал ку енĕпе мĕн тума палăртнă?**

– Çапла, ку ĕçе пилĕк-ултă çул пурнăçлатпăр. Çуркунне май уйăхĕн пуçламăшĕнче, кĕркунне сентябрь вĕçĕнче йĕркелетпĕр. Çакна чылай ветеран пĕлет тата кĕтет. Ку йĕркепе аслă ăру питĕ кăмăллă, мĕншĕн тесессĕн кашниех хăйĕн сывлăхне тĕплĕн тĕрĕслеттерме пултарать.

Эрне кун, сентябрĕн 29-мĕшĕнче, кунĕпех "Уçă алăксен кунĕ" пулать. Эсир пур кабинета та кĕрсе тӳлевсĕрех тĕрĕслев витĕр тухма, врач сĕнĕвĕсем илме пултаратăр. Палăртатăп, пирĕн патра çеç мар, районти пур сиплев учрежденийĕсенче те "Уçă алăксен кунне" ирттерме палăртнă. Пĕтĕмпе районта 38 фельдшерпа акушер пункчĕ, 4 врач амбулаторийĕ, 6 пĕтĕмĕшле практика врачĕн уйрăмĕ, 1 участокри больница, 2№ Мăн Сĕнтĕр больници тата Муркаш район тĕп больници ĕçлеççĕ. Вĕсем сире пурне те хапăл тусах кĕтсе илĕç. Унсăр пуçне 12 сехетре психотерапевт кабинетĕнче лекци пулать, пĕр-пĕринпе тĕл пулса калаçни пуриншĕн те усăллă пулĕ.

**– Аслă ăрури çынсемпе тата мĕнле ĕçсем пурнăçлатăр?**

– Ватлăх никамшăн та кĕтнĕ пулăм мар. Çынна ватă тесен кӳренмелле пек туйăнать. Чăннипе вара, çулĕсем 60-70 çитереççĕ пулин те, чунĕсем ватăласшăн мар. Врач пулнă май, мана чылай ватăпа калаçма тӳр килет. Вĕсемшĕн чи кирли ăшă сăмах калани, ватăсене хăйсем хушшинче тĕл пулса калаçма май туса пани. Çак тĕлĕшпе пур çĕрте те "Школа активного долголетия" шкул ĕçлет.

Ватлăха тепĕр чухне чир вырăнне хураççĕ, хăшĕсем ватлăх тата чир синонимсем тесе шутлаççĕ. Анчах ватлăх физиологи тĕлĕшĕнчен хăй йĕркипе пыракан пулăм. Паллах, çул кайнăçемĕн организмра пулса иртекен япаласен ылмашăвĕ ерипентерех пулса иртет. Çавăнпа та ватă çыннăн вăй хурса ĕçлеме те хал çитнĕ таран тăрăшмалла, чĕрене мĕншĕн тесен вĕçĕмех тренировка кирлĕ. Пенси çулне çитнĕ çыннăн чун киленĕçне тупма тăрăшмалла. Кашни ватă çыннăн 7 пĕчĕк савăнăç тупма тăрăшмалла: сăмахран, юратнă чечек çурăлчĕ, килĕштернĕ пускилпе сăмахларăн, юратнă мăнукпа калаçрăн... Хăйĕн организмне епле те пулин тĕлĕнтерме тăрăшмалла, чун хĕлĕхне çирĕплетмелле. Çак пурнăçпа пурăнма вĕрентмелле те ĕнтĕ шкулсенче – вырăсла "Школа активного долголетия". Паллах, ку шкулсенче культура ĕçченĕсемпе пĕрле ĕçлени пысăк витĕм кӳрĕччĕ. Тата ватăсене те активлăх кирлĕ ку ĕçре.

**Р. ИЛЛАРИОНОВА.**

Йыхрав

## Районта пĕчĕк предпринимательство кунне ирттереççĕ

Сентябрĕн 28-мĕшĕнче район администрацийĕн ларусен залĕнче 13 сехетре пĕчĕк предпринимательство кунне ирттереççĕ.

Семинара район администрацийĕн пуçлăхĕ Ю.А. Иванов уçать.

Районта кăçалхи 8 уйăхра пĕчĕк предпринимательство епле аталанса пыни пирки Э.И. Симакова каласа парать.

Чăваш Республикинчи патшалăх ĕç инспекцийĕ пĕчĕк предпринимательство субъекчĕсене тĕрĕсленин итогĕсем çинчен А.Н. Кузьмин пĕлтерет.

Налук тĕлĕшĕнчи улшăнусем пирки В.В. Павлова пĕлтерет.

Спорт

# А.Г. Николаева асăнса

Сентябрĕн 23-мĕшĕнче Шупашкар хулинчи «Спартак» спорт комплексĕнче «Советская Чувашия» хаçат парнисене çĕнсе илессишĕн А.Г. Николаев летчик-космонавта халалласа çăмăл атлетсен 68-мĕш ăмăртăвĕ иртнĕ. 400 команда ытла хутшăннă унта. Çав шутра Муркаш район команди те. Унта Калайкасси, Чуманкасси, Шомик, Сосновка шкулĕсен, район администрацийĕн, «Волга» ООО командисем хутшăннă.

Шомик шкулĕ 4-мĕш вырăн, Калайкасси шкулĕ 10-мĕш вырăн йышăннă. 29 команда хушшинче район администрацийĕн команди 4-мĕш вырăна тивĕçнĕ, «Волга» ООО команди вара «Арçын командисем» номинацире иккĕмĕш вырăна тивĕçнĕ.

Çĕнтерӳçĕсем Хисеп грамотисемпе хаклă парнесене тивĕçнĕ.

Усăллă канашсем

## Савăт-сапана тасататпăр

**Чейрен е коферен хуралса ларнă термоса** тасатма йывăрах мар. Пĕр стакан çине 1 чей кашăкĕ апат соди чухлĕ виçерен хатĕрленĕ шĕвеке термоса икĕ сехетлĕхе ярса лартмалла, вăхăт иртнĕ хыççăн лайăх чӳхемелле. Кирлĕ пулсан çак процедурăна тепĕр хутчен те пурнăçлама юрать.

**Электрокофеваркăна** столовăй уксусĕпе тасатаççĕ. Çакăн валли уксуса нагреватель спиралĕ хупланиччен ярса лартмалла, вĕреме кĕртмелле. Пĕтĕмпех сивĕнсе çитсен кофеваркăна тĕплĕн çуса тасатмалла.

**Çунса ларнă кастрюле** пĕр чей кашăкĕ тăвар хушнă уксус ярса пĕр каç лартмалла. Ирхине ăшă шывпа çуса ямалла çеç.

## Пĕлтерӳсем. Объявления


**Февраль уйăхĕнче пĕрремĕш пăруламалли хура тĕслĕ ĕне сутатпăр. Адресĕ: Уйкас Янасал ялĕ, Алексеев Геннадий. Кӳршĕсен телефонĕ: 46-2-23.**

**Организации (мебельное производство) срочно требуются рабочие с опытом работы, можно без опыта работы на постоянную работу. Оплата труда высокая, бесплатный проезд.**

**Адрес: с. Моргауши, ул. Заводская, 14. Тел.: 8-906-389-10-83.**

**2-4.**

**Ĕлĕкхи укçа, кĕнекесем, открыткăсем, статуэткăсем тата кивĕ япаласем туянатăп.**

**Тел.: 8-927-850-67-05.**

**2-5.**

**ООО «ЭНЕРГОСЕРВИС»**

**Реализует за наличный и безналичный расчет:**

**- керамзитобетонные блоки;**
**- кольца железобетонные, колодезные;**
**- столбы железобетонные, оградные;**
**- печки-прачки и печки банные (цена договорная);**
**- автомашину ГАЗ-52 (фургон, грузовой);**
**- автомашину ВАЗ-2105 на запчасти;**
**- запчасти на «Москвич-412»;**
**- плиты перекрытия на погреб (дешево);**
**- провод стальной для оград любого сечения.**

**Оказывает услуги:**

**- автотранспортные;**
**- ремонт автотранспорта;**
**- помол зерна;**
**- ремонт электроплит.**

**Выполняет работы:**

**- электромонтажные;**
**- электроизмерительные.**

**Требуются на работу:**

**- электрогазосварщик (оплата сдельная, высокая);**
**- рабочие в производственный цех (оплата 250 руб. в день);**
**- разнорабочие;**
**- столяр;**
**- автослесари.**

**Оплата своевременная, высокая!**

**Обращаться по адресу: ЧР, Моргаушский район, д. Ландыши, ул. Цветочная, 31.**

**Телефоны: 8(241) 2-15-86; сот.: 89196553004.**

**1-2.**


**Паянхи номерăн 5-8 страницисенче пай çĕрĕсен хуçисен пĕлтерĕвĕсем заказ шучĕпе пичетленеççĕ.**

**Ял тăрăхĕсенче паллашмалла.**

Моргаушский районный отдел судебных приставов выражает глубокое соболезнование сотруднице отдела Гудовой Т.Г. в связи с безвременной кончиной дочери
**МАРИИ.**

Районти выльăх-чĕрлĕх чирĕсемпе кĕрешекен станци коллективĕ Нискассинчи ветеринари участокĕнче ĕçлекен А.Г. Кудряшован юратнă хĕрĕ
**ОКСАНА**
сарăмсăр вилсе кайнă пирки вĕсен çемйипе тата тăванĕсемпе пĕрле таранăн хурланни çинчен пĕлтерет.

Моргаушский районный узел электросвязи Кугесьского МУЭС глубоко скорбит телеграфистке Добрыниной Л.З. по поводу кончины матери
**НИКОЛАЕВОЙ**
**Перасковии**
**Степановны**
и выражает соболезнование семье и близким покойной.

Çатракассинчи вăтам шкул коллективĕ кунта чылай вăхăт ачасене чăваш чĕлхипе литератури вĕрентекен Э.Д. Ярикован амăшĕ, шкул директорĕн воспитани енĕпе ĕçлекен çумĕн С.Н. Никитинан кукамăшĕ
**Фекла Сергеевна**
**СЕМЕНОВА**
вилсе кайнă пирки вĕсен çемйисемпе тата тăванĕсемпе пĕрле таранăн хурланса пĕлтерет.

Муркаш районĕнчи патшалăх пушар надзорĕн уйрăмĕн сотрудникĕсемпе 37-мĕш номерлĕ пушар чаçĕн ĕçченĕсем, юлташĕсем хăйсен ĕçтешĕн, пĕлĕшĕн тата Раççей Федерацийĕн Чрезвычайлă лару-тăру министерствин Чăваш Республикинчи патшалăх пушар надзорĕн управленийĕн пуçлăхĕн пĕрремĕш çумĕн Я.А. Егорован
**АШШĔ**
нумай хушă чирленĕ хыççăн вилсе кайнă пирки унăн çемйипе тата çывăх тăванĕсемпе таранăн хурланни çинчен пĕлтереççĕ.

Коллектив Моргаушской средней школы выражает глубокое соболезнование семье и близким в связи с безвременной кончиной
**ГУДОВОЙ**
**Марии Олеговны.**
Помним и скорбим.

Турайри вăтам шкул коллективĕ кунта водительте ĕçлекен А.А. Егорован ашшĕ
**Андрей Егорович**
**ЕГОРОВ**
вилсе кайнă пирки вĕсен çемйипе тата тăванĕсемпе пĕрле чĕререн хурланни çинчен пĕлтерет.


**ГУП ЧР "Моргаушский издательский дом"**
Моргаушская районная газета
"ÇĔНТЕРӲ ЯЛАВĔ"
УЧРЕДИТЕЛИ:
Министерство культуры, по делам национальностей, информационной политики и архивного дела Чувашской Республики.
Государственное унитарное предприятие Чувашской Республики "Моргаушский издательский дом".
**Директор-главный редактор**
**А.И. ТИХОНОВ.**

АДРЕС: 429530, Чувашская Республика, село Моргауши, улица Мира, дом 9.
ТЕЛЕФОНЫ: директор-главный редактор - 2-11-36, заместитель главного редактора - 2-12-82, бухгалтерия - 2-11-35, отделы: общественно-политической жизни, социальной жизни - 2-12-82, сельского хозяйства - 2-11-38.
E-mail: morpress@cbx.ru

Газета зарегистрирована управлением Федеральной службы по надзору за соблюдением законодательства в сфере массовых коммуникаций и охране культурного наследия по Приволжскому федеральному округу. Свидетельство о регистрации СМИ ПИ № ФС 18-2329 от 15 августа 2005 года.

**Газета выходит на чувашском языке по средам, субботам.**
**Печать офсетная, объем 1,0 п. листа. Тираж 3334.**
**Материалы на правах рекламы публикуются под знаком Р или рубрикой «Аталану çулĕпе».**
**Время подписания в печать в 17 час. 20 мин., подписано - в 17 час. 26.09.2006 г.**
**Заказ**
**Дежурный по номеру БЕЛОВ А.П.**
**ИНДЕКС ИЗДАНИЯ: 54822.**

Номер набран и сверстан в ГУП "Моргаушский издательский дом", отпечатан (вкладыши - в ГУП "Моргаушский издательский дом") в типографии ГУП "ИПК "Чувашия": 428019 г. Чебоксары, пр. И. Яковлева,13. Качество печати соответствует оттискам, предоставленным редакцией.